# БЕРДЫ КЕРБАБАЕВ

*Туркмени*

## ÇАМРĂКСЕМ

Рудашăн кĕрĕç чул çĕре
Хастарлă, паттăр çамрăксем.
Слюда пек хуçĕç тимĕре,
Асапланмасăр, çамрăксем.

Тытаççĕ — хурçă шăранать,
Пăхаççĕ — ырлăх капланать,
Чĕртеççĕ сивĕ чугуна
Хĕрÿ те харсăр çамрăксем.

Çĕре пултарĕç çавăрма,
Мăн тинĕс урлă та каçма,
Тÿпенелле те ярăнма
Пултарĕç хамăр çамрăксем.

Çынна шыв парĕç ывăнсан,
Пушхирсенче ешертĕç сад,
Тем те пĕр тăвĕç тăрăшса,
Ним мухтанмасăр, çамрăксем.

Алмаз та касĕç, хурçă та,
Ĕçре вăй-хал ӳсет татах.
Çак çĕнтерӳллĕ вăхăта
Сая ан ярăр, çамрăксем!